**Хăйĕн пурнăçне чечексемпе çыхăнтарнă çынна телейлĕ тесе калани йăнăш пулмĕ. Флора — чекексен, çуркуннен тата яшлăхăн пирĕштийĕ — пур ўсен-тăрана та хăйĕн ятне панă. Флора парнисемпе ĕçлекен çынсен ячĕ — флорист. Евгения Михайлова «Фитолайн» предприятире флорист пулса ĕçлет.**



# ЧИ ТЕЛЕЙЛĔ ПРОФЕССИ

**— Евгения Александровна, флорист ĕçĕпе паллаштарăр-ха?**

— Флористика ўнер мар, вăл ўнер элеменчĕсемпе тулнă ремесло. Флорист чечексемпе тата çут çанталăкри материалсемпе ĕçлет. Вăл чечек çыххисем тата аранжировка тăвать. Çавăнпа пĕрлех флорист интерьер валли чўлмекри ўсентăрансене суйласа илме, аранжировкăсем тума питĕ ăста. Интерьера капăрлатма кĕртме, витринăсене чечексемпе илемлетме те тивет. Флористикăна ландшафт архитектури питĕ çывăх, анчах та вăл живописпе графика пĕр-пĕринчен уйрăлса тăнă пек уйрăм хутлăх.

**— Флориста ăçта вĕренме пулать?**

— Çак профессие ятарлă курссенче вĕрентеççĕ. Санкт—Петербургра садсемпе парксенче ĕçлекен çынсене патшалăх шайĕнче хатĕрлеççĕ. Швейцарире, Голландире тата Германире флористикăна патшалăх шкулĕсенче вĕрентеççĕ. Вĕрентў 5 çул пырать. 10 çул хушшинче флорист пулса тăратăн.



**— Хăв тĕллĕн флорист специальноçне алла илме пулать-и?**

— Çакăн пек практика тĕнчипех сарăлнă. Калăпăр, Голланди тĕнчери флористика лидерĕ шутланать. Ятарлă вĕренў заведенийĕсенче вĕреннĕ флористсемпе пĕрле практиксем те пур. Вĕсем çине никам та чалăшшăн пăхмасть.

**— Мĕнле шутлатăр, çак професси хĕрарăмсем валли, е арçынсене те юрать?**

— Флорист ĕçĕ — йывăр ĕç. Унпа арçынсем ытларах ĕçлеççĕ. Европа тата Тĕнче шайĕнчи кубоксенче хутшăнакансенчен 25 проценчĕ кăна хĕрарăм. Йывăр бачоксене тата ытти йывăр япаласене çĕклеме тивет.

**— Флориста мĕнле пĕлўсем ытларах кирлĕ?**

— Уйрăм çын пахалăхĕсенчен — ĕçе юратни. Çак енчен кăштах ăсран тайăлма та пулать. Питĕ тирпейлĕ пулмалла. Чечексене кашни кун пăхса тăмалла. Явапсăрлăх чечексене пĕтерет. Флористăн чечексен ячĕсене латынь чĕлхипе пĕлмелле, биолог, ботаник пулмалла, кашни чечек уйрăмлăхĕсене, вĕсене мĕнле пăхмаллине асра тытса тăмалла. Дизайн туйăмĕ çўллĕ шайра пулмалла. Ўнер туймĕ те çав шута кĕрет. Йĕплĕ ўсентăрансенчен хăрамалла мар.

**— Çак професси паян питĕ кирлĕ-и?**

— Паллах.

**— Флорист ăçта ĕç тупма пултарать?**

— Пур чечек сутакан лавккара. Чи малтан хăвăн ĕçсене кăтартмалла. Хăв тĕллĕн те дизайнпа ĕçлеме пулать.

**— Çак профессипе мĕнле çитĕнўсем тума май пур?**

— Асăнтăм ĕнтĕ, Европа е тĕнче чемпионатĕнче хутшăнса чемпион титулне илни. Çак специалистсене пур çĕртре те хаклаççĕ. Вĕсем хаклă заказсемпе ĕçлеççĕ.

**— Флорист профессийĕн плюсĕсем тата минусĕсем?**

— Чечексемпе ĕçлени — телей. Çак ĕçре кăмăл хăпарăнать, чун хĕпĕртет. Кĕскен каласан юп куратăн. Хăш чухне вĕчĕрхенни те пулкалать. Хăш-пĕр заказ тăвакансем питĕ нервлă, юнтармăшлă. Авраллă ĕç вăхăчĕ — пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ тата Çĕнĕ çул.

Ўсентăрансемпе ĕçленĕ чухне алă кушăрхать. Вăл ĕçре хими веществойĕсене, çĕре, шыва усă курнипе çыхăннă. Аллерги те пуçланма пултарать.

## 2006 çулхи тĕлĕнмелле профессисем

CareerBuilder.com ĕç тупса паракан интернет ресурс пĕлтĕрхи чи интереслĕ профессисен списокне хатĕрлерĕ. Ыйтăмра 2450 çын хутшăннă. Çак спискокра бинго вăйин операторĕ, родео вăйинчи клоун, пулас арăм хĕртусĕ, колледжра вĕренекен студентăн стенографисчĕ, пўрне йĕрĕсене тĕпчекен аналитик, тĕкĕр скульпторĕ, арахис пахалăхне тĕпчекен инспектор, пляжри ўтсыхлавçă, çăр вĕренĕвĕн инструкторĕ, телефон экстрасенсĕ, пончиксене тултаракан, килти выльăхсене çăлакан хĕсметĕн сотрудникĕ, шыв айĕнчи гид пур.

# ĂСТАСЕН КРУЖОКĔ

Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлў паракан шкулта темиçе çул ĕнтĕ йывăçран касса ăсталас кружок ĕçлет. Кружока аслă категориллĕ учитель Георгий Витальевич Смирнов ертсе пырать. Кăçал вăл Калайкасси шкулĕнче те ĕçлет. Çу уйăхĕнче çак кружок кунта та уçăлчĕ.





Георгий Витальевич шкулта 1994 çултанпах вăй хурать. Кашни çулах вўренекенсемпе республикăра, районта иртекен 10-12 конкурса хутшăнать. Вĕсем кашниннчех малти вырăнсем йышăнаççĕ. Çакна дипломсем çирĕплетеççĕ. Кружокра ачасем ăсталăха вĕренеççĕ, нумайăшĕ малалла вĕренме каять. Акă, Алексей Владимирович Бабакин, унăн вĕренекенĕ, Шомик шкулĕнче труд учителĕ пулса ĕçлет. Мĕн ăсталаман пулĕ вăл шкулта вĕреннĕ чухне: сĕтел-пукан, йăлара усăллă ытти япаласем.



Тинрех Денис Потрясилов чăваш символикиллĕ япаласем ăсталаса республикăри фестивальре I-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Кружока ачасем питĕ нумайăн çўреççĕ. Хĕр ачасем те çак кружока çўреме тытăнчĕç

Шатракасси шкулĕпе Калайкассине çыхăнтаракан Люба ВИШНЕВА